


**Компьютер вăййисене ачасем выляса вăхăта усăсăр ирттереççĕ тесе шухăшлаççĕ.**

**Вăййăсенчен нумайăшĕ вара реакци хăвăртлăхне пысăклатаççĕ, логика шухăшлавне аталантараççĕ, кĕске вăхăтра шут тытма хистеççĕ, пĕлӳ багажне пуянлатма пултараççĕ.**

ПУЛЯ ШĂХĂРНĂ ЧУХ...

Тĕнчере экшн-вăййăсем питĕ популярлă /шутерсем, shoot тени акăлчан чĕлхинчен пени тесе куçать/. Çак вăййăсем шутне Doom, Quake, Half-Life кĕрет. Пур шутерта та пĕртенпĕр тĕп задача — тăшмансене пĕтерсе чĕрĕ юласси. Эсир вăйă вăхăтĕнче пулса иртнине хăвăр куçпа пăхатăр, «шăши» стрелки сирĕн хĕç-пăшал прицелĕ вырăнĕнче. Вăйă процесĕ хăй кăна илĕртмест. Визуаллă эффектсем, виçĕ виçеллĕ графика, дизайн тата сасă нумай çынна хăйĕн тыткăнне илет.



Виртуаллă çапăçура тĕл пенипе реакци хăвăртлăхĕ кăна мар, тактика шухăшлавĕ те питĕ пĕлтерĕшлĕ. 3D-экшн жанрлă вăййăсенче компьютер тăшманăн ăстăнĕ хавшак, анчах та вăл хăвăрт тата тĕл перет, вăйăн шайĕсенче нумай монстр пухăнать. Таната çапăçăвне иртерме май пур вăййăсенче вара компьютер вăййăçăн ăсталăхĕ çӳллĕ шайра.

Нумай 3D-шутер вăййине пĕччен выляmalla. Сеть вăййисем /мультиплейер/ те питĕ аван. Вĕсен шутне Quake 3, Unreal Tournament 2004, Counter-Strike, Battle-Field 2 вăййăсем кĕреççĕ. Çак вăййăсенче сюжетпа пĕччен выляма май çук, тепĕр вăййăçă тупас пулать.

ВĂРÇĂ
ТАТА ТĂНĂÇЛĂХ

Стратеги жанрлă вăййăра çĕр-шыв, компани, çар пуçлăхĕ пулма пулать. Компьютер стратеги вăййи экономикăпа тата çарпа çыхăннă. Экономика стратегийĕнче чи пĕлтерĕшли — хуçалăх тата культура аталанăвне çӳллĕ шая çитересси, чĕртаварпа укçатенке нумайрах пуçтарасси /çакă строительствăпа, тавар кăларса ăна сутнипе, суту-илӳ технологийĕсемпе, финанс операцийĕсемпе çыхăннă/. Вăрçă пачах та çук, е вăл иккĕмĕш рольте. Стратеги вăййинчи пулăмсем тĕрлĕ масштаблă пулма пултараççĕ. Калăпăр, хула никĕслесе ăна аталантарасси /Sim City вăййă/, цивилизацие аталантарасси /Civilization вăййисен серийĕ/. Çар стратегисенче салтаксем пухмалла, çапăçăва иртермелле, тăшман çĕрне туртса илмелле. Çак вăййăсенче экономикăна тытса пыни те пур. Калăпăр, бараксем купалама чулпа йывăç туянмалла, салтаксен хĕç-пăшалĕ валли тимĕрпе йывăç тупмалла.

Стратеги вăййисене фантастикăпа истори пайĕсем çине уйăрма пулать. Истори вăййисенче вăйă процесĕ чăн пулни çинче никĕсленет /калăпăр, «Казаки 2: Наполеоновские войны»/. Фантастикăлла вăййăра сюжетпа персонажсене шутласа кăларнă, ĕçсем авал /Stronghold 2/ е пуласлăхра /Earth 2160/ иртеççĕ.

ЧĂН ПУРНĂÇРИ ПЕК

Вăйă процесĕ чăн пулăмсенчи пек максималлă туйăнни симуляторсен тивĕçĕ. Çак эффект чăн сюжетпа, графикăпа сасă реаллă пулнипе çыхăннă.

Спортăн командăлла вăййисем /футбол, хоккей, баскетбол/ анлă саралнă.

Аркада симуляторĕсем чăнлăхпа шайлашăнса тăмаççĕ, анчах та илĕртӳллĕ, динамикăллă. Çак серие Need for Speed автогонка кĕрет. Космос карапĕсем çинче çапăçма Homeplanet, çапăçу роботчĕсемпе Mech Warrior вăйă ирĕк парать.

***Хаçатăн çитес номерĕсенче вăййăсем пирки калаçăва малалла тăсăпăр.***

## АНЕКДОТСЕМ

Дискотекăран таврăннă хĕрĕ умĕнче амăшĕ мăкăртатать:
— Сăна-ха лайăхрах хăвна, мĕнле çӳретĕн эсĕ ташлама... Часрах тăхăн та çывăрма вырт.

⁂

—Эсир, ватă çын, çанталăк мĕнле пулассине каласа пама пултаратăр-и?
—Пултаратăп, — тет лешĕ. — Сăмахран, пĕр çырантан тепĕр çыран курăнсан, çумăр пуласса.
— Енчен те курăнмасан?
— Çанталăк тĕтреллĕ.

⁂

Хĕрĕм, эсĕ мĕншĕн-ха тутлă апат-çимĕç хатĕрлеме вĕрентекен курса пăрахрăн?
— Ара, пĕлетĕн-çке, эпĕ каччă тухатăп.
— Пушшех вĕренмелеччĕ сан.
— Мĕне кирлĕ, эпĕ курсра вĕрентекене качча тухатăп вĕт.

**Аврора пухнă**
**/Калайкасси шкулĕ/**

## ТĔЛĔНМЕЛЛЕ ПАТШАЛĂХ

***Хаклăран та хаклă вулакансем!*** «Хыçалти парта» хаçатра çĕнĕ викторина. Географипе историе юратакансем хутшăнмасăр ан юлăр. Сирĕн эпĕ çырса панă çĕр-шыв ятне, тĕп хулине çырса палăртмалла, унăн ялавне ӳкерсе пирĕн редакцие ярса памалла.

Ку çĕр-шыв Европăри чи пысăк архипелаг çинче вырнаçнă. Машинăсем, самолетпа пăрахутсем туса кăларни ĕç кунта пысăк вырăн йышăнать.

Пирĕн эрăччен I пинçуллăхра çав патшалăх территорийĕнче кельтсем пурăннă. Пирĕн эрăччен I ĕмĕрте вара çав çĕр-шыва римлянсем çĕнсе илнĕ. Унтан, V-VI ĕмĕрсенче, саксем хуçа пулса тăраççĕ. 1066 çулта Çурçĕр Францинчен норманнсем килсе кĕнĕ хыççăн патшалăхра феодализм пуçланнă.

Çак çĕр-шывра 1000 ытла хула. Вĕсенчен 44-шĕ тинĕс хĕрринче вырнаçнă. Тĕп хулине пирĕн эрăри 43 çулта пуçарнă, 4 ĕмĕр хушши римлянсен суту-илӳ центрĕ пулнă. Çак патшалăхра паллă çыравçăсемпе ăсчахсем /ученăйсем/ çуралнă. 1784 çулта Джордж Уатт пĕррремĕш пăс двигательне шухăшласа тупнă, тепĕр çултан Эдвард Катрайт пĕрремĕш пир-авăр станокне пĕтĕм тĕнчене кăтартнă.

***Мĕнле çĕр-шыв çинчен сăмах пынине ăнланса илтĕр-и?***

Апла пулсан хуравсене редакцине раштавăн 31-мĕшĕччен ярса парăр. Ăнăçу сунатăп.

***Сирĕн çулçӳревçĕ***
***Дима СОКОЛОВ***
***Калайкасси шкулĕ, 9 класс.***

## КĂСĂКЛĂ ФАКТСЕМ

***Çĕр-шывсем тата халăхсем***

1. Аляска флагне 13 çулхи ача ӳкернĕ;
2. Салтак чысне нихăш çĕр-шывра та сулахай алăпа памасть;
3. Антарктидăн тĕнчери телефон кодчĕ — 672;
4. Кук капитан Антарктидăсăр пуçне Çĕр чăмăрĕн пур континенчĕнче те пулса курнă;
5. Австралин 50 центĕнче малтан 2 доллар чухлĕ кĕмĕл пулнă;
6. IX тата XI ĕмĕрсенче Нил юхан шыв пăрпа витĕннĕ;
7. Анăç Африкăри матами йăхĕ футбол вăййине çын пуç шăммипе вылянă;
8. Монако наци оркестрĕ çарĕнчен пысăкрах;
9. Сахара пушхирĕнче 1979 çулхи нарăсăн 18-мĕшĕнче юр çунă;
10. Канада хăй лаптăкăшĕпе Китайран пысăкрах, Китай — Америкăран.



# ÇАК КУН ИСТОРИРЕ

Раштавăн 8-мĕшĕ

*1741 ç.* — Витус Беринг командор-капитан вилет /1681 ç.ç./. 1703 çулта Дани тинĕс ишевçине I-мĕш Петр патша ĕçлеме чĕнсе илет. Вăл ыйтнипе Беринг пĕрремĕш Камчатка экспедицине йĕркелет, унта Чириковпа пĕрле Петропавловск хулине никĕслет.

Раштавăн 9-мĕшĕ

*1842 ç.* — Англире пĕрремĕш хут Раштав открыткине кăлараççĕ;

*1884 ç.* — Чикагора пурăнакан Левант Ричардсон ролик коньки патентлет;

Раштавăн 10-мĕшĕ

1813 ç. — Петербургра Бержа заводĕнче Раççейри пĕрремĕш парохода туса пĕтереççĕ. Вăл йывăçран пулнă, вăрăмăшĕ — 18 метр, 4 лаша вăйĕ чухлĕ пăс балансир машинипе ĕçленĕ;

Раштавăн 19-мĕшĕ — Пĕтĕм тĕнчери чухăнсене пулăшмалли кун

*1901 ç.* — Пĕрремĕш хут Нобель премине пама пуçланă;

*1933 ç.* — Иван Бунина Нобель премине параççĕ;

*1948 ç.* — «Çын прави» ятлă Декларации йышăннă. Ăна Тĕнчери Пĕрлешӳллĕ Нацисен Организацийĕ «Çын Прависен кунĕ» тесе уявлать;

Раштавăн 11-мĕшĕ

1894 ç. — Парижра пĕтĕм тĕнчери автовыставка уçăлать. Унта 9 фирма хутшăнать;

1946 ç. — «UNICEF» ятлă ачасене пулăшакан фонда Пĕрлешӳллĕ Нацисен Организацийĕ никĕслет;

Раштавăн 10-мĕшĕ — Пĕтĕм тĕнчери ачасен радиовещани тата телевиденийĕн кунĕ

1994 ç. — Чечен çĕрĕ çине Раççей Федераци çарĕ кĕрет;

Раштавăн 12-мĕшĕ

1901 ç. — Гульельмо Маркони Итали изобретателĕ трансатлантика радиоçыхăнăвне йĕркелет;

1979 ç. — Совет Союзĕн Коммунистла партин комитечĕ Афганистана çар ярасси çинчен йышăну тытать;

Раштавăн 13-мĕшĕ

1769 ç. — 13 çулхи Вольфганг Амадей Моцарт пĕрремĕш хут концертсемпе çӳреме пуçлать;

Раштавăн 14-мĕшĕ

1825 ç. — I-мĕш Николай императора хирĕç Санкт—Петербургри Сенат майтанне декабристсен вăрттăн обществи тухать. Вĕсен вăтам ӳсĕмĕ — 27 çул. Историре вăл декабристсен пăлхавĕ ятпа юлать;

Раштавăн 15-мĕшĕ

1970 ç. — Пĕрремĕш хут Венера çине «Венера-7» совет планетасем хушшинче вĕçекен станцийĕ анса ларать;

Раштавăн 16-мĕшĕ

1702 ç. — I-мĕш Петр «Ведомости» ятлă хаçат кăларасси пирки хушу кăларать;

1773 ç. — «Бостонра чей ĕçни». Бостонра пурăнакансем Ост-Инди компани карапне тапăнса тинĕсе 342 ещĕк чей ывăтаççĕ;

Раштавăн 17-мĕшĕ

1770 ç. — Людвиг ван Бетховен çуралать;

Раштавăн 18-мĕшĕ

1921 ç. — Юрий Никулин артист çуралнă;

1940 ç. — Гитлер 21№ «Барбаросса» план-директива алă пусать;

Раштавăн 19-мĕшĕ

1686 ç. — Робинзон Крузо 28 çул, 2 уйăх та 19 кун пурăннă утрав çинчен киле таврăнать;

Раштавăн 24-мĕшĕ — Раççей çарĕн чапĕн кунĕ

1699 ç. — I-мĕш Петр Çĕнĕ Çула авăнăн 1-мĕшĕнчен кăрлачăн 1-не куçарасси çинчен хушу кăларать;

1863 ç. — Фредерик Уолтон акăлчан çынни линолеум патентлет;

Раштавăн 20-мĕшĕ

1828 ç. — Канада Раççейпе дипломати хутшăнăвне йĕркелет

## ЭПĔ ТĔНЧЕНЕ ÇАПЛА КУРАТĂП




Муркаш лицейĕ Раççей Федерацийĕн президенчĕн грантне çĕнсе илнĕ хыççăн кабинетсенче плазма телевизорĕсемпе ноутбуксем вырнаçтарма пултарчĕ.

Лицейра вĕренекенсем уроксенче тĕрлĕ опытсене, документсене тата нумай-нумай интереслĕ япаласене экран çинче курма пултараççĕ. Уçă урок, е наукăпа практика конференцийĕ, е форум пулать-и — яланах пире проектсемпе тĕпчев ĕçĕсене кăтартма информаципе коммуникатив технологийĕсем пулăшаççĕ.

Пирĕн лицей вĕрентĕвĕн тĕп енĕсенчен пĕри — техника профилĕ. Çак вĕрентӳ çулĕнче вĕренекенсем информатикăпа çакăн йышши тĕпчев ĕçĕсем ирттерчĕç: «Эпĕ тĕнчене çапла куратăп», «Тĕрлĕ майпа информаци парасси». «Эпĕ тĕнчене çапла куратăп» темăпа ирттернĕ ĕçсенчен чи ăнăçлисем çаксем пулчĕç: Люда Васильева /11 Г кл./, Андрей Сергеев /11 Т кл./, Лена Киршева /10 Г кл./, Наталья Полякова /10 Г кл./, Милана Степанова / 10 Г кл./. Халĕ «Модельлесси» тата «Word программăра капăрлатасси» темăсемпе тĕпчев ĕçĕсем ирттереççĕ.

**Алина ЛЕСКИНА**
**Муркаш лицейĕн информатикăна вĕрентекенĕ**

***Ӳкерчĕк çинче Муркаш лицейĕнче вĕренекен Андрей Сергеев /11 Т кл./ ĕçĕ***

## КĔÇЕХ ЮБИЛЕЙ

**Спиридон Михайлович Янтуш пĕрремĕш чăваш этнографĕ, историкĕ, халăх йăли-йĕркине пухаканĕ, çыравçи тата чăваш халăхне çутта туртаканĕ.**



Вăл раштавăн 28-мĕшĕнче/16-мĕшĕнче/Хусан кĕпернине кĕрекен Чикме уесĕнчи Юнкăпуç ялĕнче хресчен çемйинче çуралнă. 1829 çулта ашшĕ ăна Чикмери паллакан купса патне илсе каять. Ача вырăс çемйинче ĕçлесе пурăннă хушăрах тĕрĕс те илемлĕ çырма тата вулама вĕренет. 13 çултан вăл çыру ĕçĕпе тăранса пурăнать. 1842 çултан пуçласа С. Янтуш Чикмери судра тăлмачă /переводчик/ пулса ĕçлеме тытăнать. Май пур таран чăвашсене йывăр айăплавсенчен хӳтĕленме те пулăшать.

*Раштав уйăхĕн 23-мĕшĕнче Юнкă тăрăхĕнче С.М. Янтуш 185 çул тултарнине халалланă пысăк уяв тата «С.М.Янтушăн ăслăлăх эткерĕ» ятпа ăслăлăхпа ĕçлĕх конференцийĕ иртĕ, унăн палăкне тата шкулта унăн музейне уçĕç.*

*Уяв çинчен тĕплĕнрех çитес номерте çырса кăтартăпăр.*